Муркаш район хаçачĕ

# Çĕнтерӳ ялавĕ

1944 çулхи çу уйăхĕн 5-мĕшĕнченпе тухать

74 (7928) № ✻ Шăмат кун, 2011 çулхи сентябрь (авăн) уйăхĕн 24-мĕшĕ ✻ Хакĕ ирĕклĕ

Сентябрĕн 27-мĕшĕ – Воспитатель кунĕ

## Ачасене – ырăлăхпа хӳтлĕх

***Йӳçкассинчи «Василек» ача садĕнче ачасене илемлĕх тĕнчине явăçтарас, вĕсен сывлăхне çирĕплетес тесе нумай тăрăшаççĕ. Инна Ксенофонтовна Павлова воспитатель (сулахайри) акă 27 çул çак ĕçре. Альбина Лаврентьевна Васильевăн (сылтăмри) та ĕç стажĕ пысăк – 20 çул. Наталия Вячеславовна Герасимова ача сачĕн ертӳçинче пилĕк çул вăй хурать, маларах вара воспитательре 17 çул тăрăшнă. Пысăк опытлă специалистсем куллен хăйсен ăсталăхне ӳстерсе ачасен аталанăвне çĕнĕлĕхсем кĕртсе йĕркелеççĕ, вĕсене ырăлăхпа хӳтлĕх тĕнчинче ӳстереççĕ.***

**Н. НИКОЛАЕВА**
**сăн ӳкерчĕкĕ.**



**ХИСЕПЛĔ ПЕДАГОГСЕМ,**
**АЧА САЧĔСЕНЧЕ ĔÇЛЕКЕНСЕМ,**
**ШКУЛЧЧЕНХИ ВĔРЕНТĔВĔН ВЕТЕРАНĔСЕМ!**

Сире пурне те профессиллĕ уявпа саламлатăп!

Шкулчченхи вĕрентӳ паян питĕ кирлĕ. Ăна халăх ыйтать. Шкулчченхи вĕрентӳ учрежденийĕсен пур коллективĕ те ырă традицисене упраса, хăйсен тавра курăмĕпе ăсталăхне ӳстерсе вăхăтпа тан пырать. Çапла районта пурăнакансем шкулчченхи вĕрентӳпе воспитани тĕлĕшпе ача сачĕсенчен мĕн кĕтнине пурнăçа кĕртет.

Шкулчченхи вăхăт ачан пурнăçĕнче уйрăмах пĕлтерĕшлĕ те ответлă. Çак тапхăрта ачасен сывлăхĕ те никĕсленет, вĕсем мĕнле çын пуласси те çакăнтан вăй илсе пырать. Кашни ачан ырă ачалăх пуласси тата унăн малашнехи шăпи сирĕн иксĕлми чун ăшшинчен, пурнăç ăсĕнчен, кашни ачан кăмăл-туйăмне тимлĕх уйăрнинчен килет.

Воспитатель – професси кăна мар. Ку вăл пысăк мисси – çынра çын тенине çирĕплетесси. Пĕчĕк çынна аталантарма эсир нумай вăй хуратăр, кашнин тăнăçлăхĕшĕн тăрăшатăр.

Тавах сире, ача сачĕсенче ĕçлекенсем: воспитательсемпе кĕçĕн воспитательсем, медицина ĕçченĕсем, музыка ертӳçисем тата поварсем – ачалăха тĕлĕнмелле тĕнче тăвакансем – сирĕн ĕçшĕн, ачасене юратнăшăн, вĕсене телейлĕ те ăслă-тăнлă тума пултарнăшăн.

Сирĕн коллективсенче яланах килĕшӳпе тăнăçлăх пултăр. Çирĕп сывлăх сунатăп, телей, ăнăçусем сире, сирĕн воспитанниксене тата вĕсен ашшĕ-амăшĕсене.

**Ю. ИВАНОВ,**
**район администрацийĕн пуçлăхĕ.**

Пĕрлехи информаци кунĕнчен

## Хăйсенчен нумай килнине ăнланаççĕ

***Иртнĕ юн кун республикăра пĕрлехи информаци кунĕ иртрĕ. Чăваш Республикинчи хăй тĕллĕн çӳрекен машинăсемпе ытти техникăна пăхса тăракан патшалăх инспекцийĕн ертӳçи – республикăри тĕп патшалăх инженер-инспекторĕ В.П. Димитриев ертсе пыракан информаци ушкăнĕ район администрацийĕн пуçлăхĕпе Ю.А. Ивановпа тĕл пулса район ĕçĕ-хĕлĕпе паллашнă хыççăн 5 ушкăна пайланса ĕçлерĕ. Информаци ушкăнне кĕрекенсем район администрацийĕн яваплă ĕçченĕсемпе пĕрле Юнкă, Москакасси, Мăн Сĕнтĕр, Ярапайкасси, Чуманкасси ял тăрăхĕсенчи предприятисемпе организацисенче, учрежденисенче пулчĕç, вĕсенчи ĕç коллективĕсемпе тĕл пулчĕç. Тĕл пулусенче хальхинче республика бюджетне улшăнусем кĕртнине, ял хуçалăх ĕçĕсем епле пынине, РФ Федераллă Пухăвĕн Патшалăх Думин тата ЧР Патшалăх Канашĕн депутачĕсен суйлавне хатĕрленсе ирттерессине пăхса тухрĕç. Çавăн пекех ял çыннисене хумхантаракан ыйтусене татса памалли çул-йĕре палăртрĕç.***

Владимир Павловичпа Юрий Александрович çак кун Юнкă ял тăрăхĕнче пулчĕç. Ырă улшăнусем ку тăрăхра çук мар. Ял тăрăхĕн пуçлăхĕ В.В. Фомин тавралăха тирпейлессипе, çĕр ыйтăвĕсемпе çине тăрса ĕçленине палăртрĕ. Обществăлла формированисем те кулленхи ĕçре пулăшса пыраççĕ. Уйрăмах хĕрарăмсен канашĕ питĕ активлă пулнине ларĕ. Ăнăççăр çемьесемпе ĕçлессинче те ырă палăрăмсем курăнма пуçларĕç. «ВаСем» чикĕллĕ яваплăхлă общество йĕркеллĕ ĕçлени ял халăхне ĕçпе тивĕçтерме пулăшать. Кунта ĕçлекенсем çав тери кăмăллă. Çĕр улми çинче вĕсем кунне 450 тенкĕ укçа ĕçлесе илеççĕ. Юнашарах «МСО «Моргаушская» акционерсен хупă обществи пурри те ку ял тăрăхĕнче пурăнакансемшĕн питĕ лайăх. Юнкăри вăтам шкулта учительсемпе ирттернĕ тĕл пулура унăн ертӳçине уйрăммăн тав турĕç вĕрентекенсем. «Кирек епле мероприятие ирттерме те пулăшать В.Н. Семенов», – терĕç вĕсем. Район администрацийĕнче культура ĕçченĕсемпе ирттернĕ тĕл пулура вара Владислав Николаевич Кăпас клубне электричествăпа хутса тăмалла тăвассинче пулăшма шантарчĕ.

Владислав Николаевич ертсе пыракан предприятире те пулчĕ информаци ушкăнĕ. Вăл кунта стройматериал хатĕрлес ĕçе йĕркелесе ярасшăн. Çавна май çурт тума патшалăх пулăшăвĕ паракан программăна предприяти хăй те шăпах çуртсем тунăран хăçан та пулин илнĕ кредитăн процент ставкине патшалăх енчен субсидилессине йĕркене кĕртессе шанать.

Пурăнакан малаллах пăхать. Ку тăрăхра пурăнакансене хумхантаракан ыйтусем татах та пур. 8 ялтан 4-шĕнче шыв пăрăхĕсем çук. Çавăнпа та çăлсем чавассипе те ĕçлемелле. Ялсем хушшинче çул тăвас ыйту та кун йĕркинчен тухмасть кунта. Ку енсемпе проектсем тăвас ыйтупа ĕçлеççĕ. Учительсемпе тата культура ĕçченĕсемпе ирттернĕ тĕл пулусенче ку ĕçсене пурнăçа кĕртме пулăшакан республика программисене кĕтсе ларни çеç çителĕксĕррине палăртрĕç. Халăхпа калаçса татăлса килсерен укçа пуçтарса çăлсем чавма, çулсене йĕркене кĕртме май пурри çинчен калаçрĕç. Нимепе ĕçлесен ĕç те хăвăртрах пулать. Çатма çинчи пек асфальт çул пулмасан та малтанлăха. Çула хăпартса, вак чул сарса майласан, машинăпа кĕрсе тухма та пулать, çуран çӳреме те çăмăлрах. Информаци ушкăнĕн ертӳçи В.П. Димитриев Шупашкар районĕнчи пĕр ял тăрăхĕнче çынсем хăйсен вăйĕпе çул тунă тĕслĕхе илсе кăтартрĕ. Район администрацийĕн пуçлăхĕ Ю.А. Иванов калашле, пыра-киле ял тăрăхĕн администрацийĕ пĕтĕмпех ку ĕçе хăй çине илес вăхăт та çитĕ-ха. Хальлĕхе вара вырăнти бюджет пур ĕмĕте те туххăмрах пурнăçа кĕртме май памасть. Кăпасри çула йĕркене кĕртес ĕçре район администрацийĕ ятарлă техника тупса пама пулнине пĕлтерчĕ Юрий Александрович. Ытти ĕçсене вара ял тăрăхĕн пуçлăхĕ В.В. Фомин вырăнтах майлаштарма май пуррине палăртрĕ.

(Вĕçĕ 2-мĕш стр.).

Декабрĕн 4-мĕшĕ – пĕрлехи сасăлав кунĕ

## Политика партийĕсен регионти уйрăмĕсем хăйсен кандидачĕсене тăратаççĕ

Сентябрĕн 17-мĕшĕнче **«Раççей патриочĕсем» политика партийĕн Чăваш регион уйрăмĕн** черетсĕр конференцийĕн иккĕмĕш тапхăрĕ иртнĕ. Конференцире вăрттăн сасăласа Чăваш Республикин пиллĕкмĕш созыври Патшалăх Канашне депутата суйлама пĕрлехи суйлав округĕпе 38 çынран тăракан кандидатсен списокне çирĕплетнĕ. Пĕтĕмĕшле республика пайне 3 кандидат кĕртнĕ: В.Д. Солдатов, Е.В. Горбунов, В.Н. Кириенко. Списока çавăн пекех 17 регион ушкăнĕ çине пайланă.

ЧР Патшалăх Канашне пĕр мандатлă суйлав округĕпе депутата суйлама вăрттăн сасăласа кандидатсен 17 çынран тăракан списокне çирĕплетнĕ.

* * *

Сентябрĕн 17-мĕшĕнче Шупашкар хулинче **«Раççей Федерацийĕнчи коммунистсен партийĕ» политика партийĕн Чăваш Республикинчи уйрăмĕн** 60-мĕш черетсĕр конференцийĕн иккĕмĕш тапхăрĕ иртнĕ.

Чăваш Республикин пиллĕкмĕш созыври Патшалăх Канашне пĕр мандатлă суйлав округĕпе «Раççей Федерацийĕнчи коммунистсен партийĕ» политика партийĕн Чăваш Республикинчи уйрăмĕ» суйлав пĕрлешĕвĕнчен депутата суйлама вăрттăн сасăласа 22 çынна кандидата сĕннĕ.

Чăваш Республикин Патшалăх Канашне пĕрлехи суйлав округĕпе «Раççей Федерацийĕнчи коммунистсен партийĕ» политика партийĕн Чăваш Республикинчи уйрăмĕ» суйлав пĕрлешĕвĕнчен кандидатсем тăратасси пирки те ыйту сӳтсе явнă. Кандидатсене уççăн сасăласа сĕннĕ тата вăрттăн сасăласа çирĕплетнĕ. Пĕтĕмĕшле республика пайне 3 çынна, 22 регион ушкăнне 44 çынна суйланă.

* * *

Сентябрĕн 17-мĕшĕнче Чăваш Республикин пиллĕкмĕш созыври Патшалăх Канашне депутата суйлама кандидатсем тăратас ыйтупа **«Раççейри либерал-демократсен партийĕ» политика партийĕн Чăваш регион уйрăмĕн** конференцийĕ иртнĕ. Пĕр саслăн тенĕ пекех конференци ĕçне хутшăнакансем Чăваш Республикин пиллĕкмĕш созыври Патшалăх Канашне пĕрлехи суйлав округĕпе депутата суйлама партин Аслă канашĕ сĕннипе сасăласа Раççей Федерацийĕн 47 гражданĕнчен тăракан списока çирĕплетнĕ. Пĕтĕмĕшле республика списокне парти ертӳçи В.В. Жириновский тата ЧР Патшалăх Канашĕнчи ЛДПР фракцийĕн хальхи депутачĕсем А. Кулагин тата Ю. Шлепнев кĕнĕ. Кашни регион ушкăнĕнчех 2-шер кандидат тăратнă.

Чăваш Республикин пиллĕкмĕш созыври Патшалăх Канашне пĕр мандатлă суйлав округĕпе депутата суйлама кандидатсем тăратассипе партин Аслă канашĕ сĕннипе конференцие хутшăнакансем унччченхи пекех пĕр саслăн тенĕ пекех (хирĕç пĕр сасă) килĕшнĕ. Парти пĕр мандатлă кашни суйлав округĕпех «Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕн депутачĕсене суйласси çинчен» Саккунпа килĕшӳллĕн май пур таран кандидат тăратнă.

* * *

Сентябрĕн 17-мĕшĕнче **«Тĕрĕслĕхшĕн тăракан Раççей» политика партийĕн Чăваш Республикинчи регион уйрăмĕн** конференцийĕ иртнĕ.

Кун йĕркинче парти съездне Мускава кайма делегатсем суйлассин, партин суйлав умĕнхи программин проектне сӳтсе явассин, çавăн пекех Чăваш Республикин Патшалăх Канашне депутата суйлама кандидатсем тăратассин ыйтăвĕсем пулнă.

Партин суйлав умĕнхи программин проектне пĕр сехет çурăна яхăн сӳтсе явнă хыççăн делегатсем Чăваш Республикин Патшалăх Канашне депутата суйлама кандидатсем тăратассин ыйтăвне конференцин виççĕмĕш тапхăрне куçарма сĕннĕ. Вăл сентябрĕн 24-мĕшĕнче съезд иртнĕ хыççăн пулать.

Конференцин виççĕмĕш тапхăрĕ хăçан иртессине партин регион уйрăмĕн бюровĕ палăртĕ.

* * *

**«Раççейри демократсен пĕрлештернĕ «Яблоко» партийĕ» политика партийĕн Чăваш регион уйрăмĕн** бюровĕ йышăннипе сентябрĕн 18-мĕшĕнче конференци иртнĕ. Чăваш Республикин Патшалăх Канашне пĕр мандатлă 19-мĕш суйлав округĕпе депутата суйлама партин регион уйрăмĕн председателĕн В.И. Аркадьевăн кандидатурине çирĕплетнĕ.

**ЧР Тĕп суйлав комиссийĕн**
**материалĕсем тăрăх.**

Пĕрлехи информаци кунĕнчен

# Хăйсенчен нумай килнине ăнланаççĕ

(Вĕçĕ. Пуçл. 1-мĕш стр.).

Ку тăрăхри тепĕр çивĕч ыйту вăл – Юнкă шкулĕнче спортзал çукки. Район администрацийĕн пуçлăхĕ ку ыйтупа республикăна тухассине палăртрĕ. Ялти хоккей коробкине электричество кĕртес ыйтăва татса памаллине те палăртрĕ. Çакă ял халăхне спорта анлăн явăçтарма пулăшать.

Юрий Александрович тĕл пулура районта кашни çулах икшер шкулта çивитти улăштарнине палăртрĕ. Юнкă шкулĕпе ача садĕнче ĕçлекенсене те çивиттирен шыв анни канăç памасть. Шкулти котельнăй 3 объекта ăшăтса тăрать. Çавăнпа та шкул директорĕ В.Г. Федоров тепĕр котел çав тери кирлине палăртрĕ.

Учительсем те, культура ĕçченĕсем пекех, çўп-çап пуçтарса çĕнĕ полигона ăсатас ыйтăва хускатрĕç. Ял çыннисенчен хăшĕсем çак ĕçшĕн укçа тўлесшĕн марри сисĕнет. Хваттерсенче пурăнакансем çакăншăн тахçаннах тўлеççĕ. Ял çыннисем çакна йывăррăн хăнăхаççĕ пулас. Вĕсемпе ăнлантару ĕçне иртермелли çинчен калать çакă. Ял администрацийĕн кашни хуçалăхпа договор тумалли çинчен.

Тĕл пулусене çынсем вырăнти ыйтусене вырăнтах татса пама май пуррине ăнланни курăнчĕ. Пушар хăрушсăрлăх енĕпе те ку тăрăхра пурăнакансем ырă пуçару турĕç. Пушар машинине тытса тăма кашни килтен уйăхра 30-шар тенкĕ укçа пуçтараççĕ. Анчах «мĕншĕн пирĕн тўлемелле» текенсем те çук мар халăх хушшинче. Инкек-мĕн пулас пулсан (ун пекки ан пултăр-ха – **(авт.)** районтан пушар машинисем, паллах, килеççĕ. Анчах вырăнти частарах çитет-çке. Халăхшăн лайăх пултăр тесе тунă утăм ку. Тахçан ку тăрăхра пĕр пушарта 13 çурт çунса кайнине аса илсен, пушар машинине хăйсен вăйĕпе тытса тăни ытлашши ĕç марри ăнланса илеççĕх пулĕ-ха çўлерех асăннă сăмахсене калакансем.

Юнкăра 18 хваттерлĕ çуртра пурăнакансен те пуçа ыраттаракан ыйту пур. Ку çуртра тунăранпа та (1983 ç.) юсав ĕçĕсем иртермен. Владимир Павловичпа Юрий Александрович вырăнта пулса çурт мĕнле лару-тăрура пулнипе паллашрĕç. Район администрацийĕн пуçлăхĕ çитес вăхăтрах кунта ятарлă комисси килсе çуртра пăхса, халь тума май пур мероприятисене палăртасси çинчен каларĕ. Çуртра пурăнакансем вара çитес çул ăна нумай хваттерлĕ çуртсене юсамалли программăна кĕртес тесе хăйсенчен килнине йăлт тума шантарчĕç.

Информаци кунне пĕтĕмлетнĕ май республика шайĕнче татса памалли ыйтусене палăртрĕç. Хуларан килнисем вара Муркаш районĕнче пурăнакансем малаллах турттăннине, тата та лайăхрах пурăнасшăн тăрăшнине палăртрĕç.

**Л. ПАВЛОВА.**

# Тĕл пулусенче ыйтусем пулаççех

Пĕрлехи информаци кунĕнче Йўçкасси ял тăрăхĕн пуçлăхĕ С.Н. Иванов, районти социаллă хўтлĕх пайĕн пуçлăхĕн çумĕ А.Н. Кузьмин тата Ватă çынсен кунĕ çитсе килнĕ май ветерансен вырăнти канашĕн председателĕ З.М. Кутузов ял тăрăхĕн территорийĕнчи хăш-пĕр ĕç коллективĕсемпе тĕл пулма кăмăл турĕç. Мĕншĕн тесен çынсемпе куçа-куçăн тĕл пулни, хальхи лару-тăрупа паллаштарни, вĕсен шухăш-кăмăлне, ыйтăвĕсене уяни нихăçан та ытлашши мар. Çитменнине пĕрлехи информаци кунĕнче сўтсе явма пăхнă ыйтусенчен ытларахăшĕ пурне те тўрремĕнех пырса тивет. Кусем вĕсем кĕрхи уй-хир ĕçĕсем те, РФ Федераллă Пухăвĕн Патшалăх Думин депутачĕсен тата ЧР Патшалăх Канашĕн депутачĕсен суйлавне хатĕрленесси те.

Ушкăнрисем Йўçкассинчи пĕтĕмĕшле практика врачĕн уйрăмне, ача садне çитсе курчĕç, коллективсемпе тĕл пулчĕç. Çавăн пекех хăш-пĕр ветерансем патĕнче килĕсене пулса вĕсен кулленхи пурнăç условийĕсемпе те паллашрĕç.

Ялта пурăнаканăн ĕç укçи паян çителĕклĕ тесе калаймăн. Ача садĕнче вăй хуракансен те вăл пысăк мар. Кунпа пĕрлех ача сачĕн çивиттине те юсама вăхăт çитнĕ ĕнтĕ. Тепĕр пысăк ыйту тата вăл – ача садне çўрекенсене шкул автобусĕпе илсе çўреме ирĕк паманни.

С.Н. Иванов палăртнă тăрăх çĕрпе усă курассинче йĕркене пăснă тĕслĕхсем çук мар. Акă хăшĕсем никамран нимĕнле ирĕк илмесĕрех уйăрса панă çĕр лаптăкĕсене пысăклатаççĕ. Кун пеккисене штрафлама та тивнĕ, йĕркене пăснине тўрлетме конкретлă вăхăта палăртнă. Çĕршĕн налук тўлессине те кая хăварма кирлĕ мар.

Тăван тавралăх тирпейилемĕ пирки те калаçмасăр май çук паян. Тĕрлĕ çўп-çап, ăпăр-тапăр ăçта килчĕ унта пăрахма чарăннасан вĕсен айнех пулма пултаратпăр. Çавна май малашне кашни уйрăм хуçалăхăн кил-çуртри йăла каяшĕсене турттарса кайма Муркашри пурăнмалли çурт-йĕрпе коммуналлă хуçалăх предприятийĕпе килĕшў тумалла пулать. Шывшăн халĕ тўленĕ пекех уйăхне пĕр çын пуçне 25 тенкĕ каяш турттарнăшăн тўлемелле пулать. Килĕшў тумалли бланксене ял тăрăхне илсе килнĕ ĕнтĕ.

Паллă ĕнтĕ, хальхи вăхăтра строительство ĕçĕсене туса ирттерме çăмăл мар. Пĕтĕмпех укçатенкĕпе çыхăннă, хаксем сумлă. З.М. Кутузова вара, Христос çўле хăпарнин Йўçкассинчи чиркĕвĕн прихут канашĕн председателĕ пулнă май, Йўçкасси чиркĕвне туса пĕтересси шухăшлаттарать. Çак ĕçре пурне те май пур таран пулăшма чĕнсе каларĕ вăл. Укçа-тенкĕпе те, строительство материалĕсемпе те чирку тума пулăшма май çитернисене ятранах асăнса тав сăмахĕ каларĕ.

Ватă çынсен кунĕ çитсе килнĕ май тĕл пулусенче сăмах ун пирки те хускатрĕç, ăна халалланă мероприятие пысăк шайра ирттерме кирлине палăртрĕç.

**В. ШАПОШНИКОВ.**

# «Пурнăç ырă еннех улшăнать»

Эпĕ хутшăнакан ушкăн Мăн Сĕнтĕр ял тăрăхĕнче пулчĕ. Ял тăрăхне Чăваш Республикин Президенчĕ кĕске вăхăтрах икĕ хутчен килни пĕтĕмĕшле сăн-сăпат çине ырă йĕр хăварнă, илемлĕх енĕпе хăш-пĕр улшăну кĕртнĕ. Чи малтанах район администрацийĕн пуçлăхĕн çумĕ Л.Ю. Тарасова ертсе пыракан ĕç ушкăнĕ ял тăрăхĕн администрацийĕнче пухăннă активпа тĕл пулса калаçрĕ.

Чăваш Республикин бюджетне Федераллă бюджетран тĕллевлĕ тĕрлĕ ĕç пурнăçлама хушма укçа-тенкĕ уйăрнă. Çавна май хăш-пĕр улшăну пирĕн района та пырса тиврĕ. Çапла вара социаллă тўлевсем валли, çамрăк çемьесене çурт-йĕр çĕклеме 2,4 миллиона яхăн; ялсене автоçул-йĕрпе çыхăнтарма 12,5 миллион; шкул çулне çитмен ача-пăча учрежденийĕсенче çĕнĕрен йĕркеленĕ хушма ушкăнсем валли сĕтел-пукан, ытти оборудовани туянма 0,5 миллиона яхăн; çавăн пекех нумай хваттерлĕ çуртсенче капиталлă юсав ĕçĕсем ирттерме 6,0 миллион тенкĕне яхăн укçа-тенкĕ уйăрнă.

– Çакăн пек хушма укçа-тенкĕ уйăрни ял халăхĕн, ача-пăчан, хваттерсенче пурăнакансен пурнăç условийĕсене лайăхлатма питĕ вырăнлă. Çуртйĕр çĕклеме никама та çăмăл мар, акă кунта çамрăк çемьесем валли пысăк пулăшу уйăрнă. Шкул çулне çитмен ача-пăча валли вырăн сахал пулни те хăйне май йывăрлăх пулса тăрать. Çапла вара патшалăх пулăшăвĕпе тата эпир сирĕнпе пĕрле тăрăшнипе кирек епле ыйтăва та çăмăллатма, татса тама пулать, – терĕ район администрацийĕн пуçлăхĕн çумĕ Л.Ю. Тарасова пухăннисене бюджет, çитсе килекен суйлав йĕрки тата ытти ĕç-хĕл пирки ăнлантарнă май.

Район администрацийĕн 865 номерлĕ постановленийĕпе килĕшўллĕн районта пĕрлехлĕ дежурнăй диспетчер служби йĕркеленĕ. Ăна тĕрлĕ шайри инкек-синкекпе оперативлăрах кĕрешме тунă. Çулталăк пуçланнăранпа служба пульчĕ çине 193 пĕлтерў килнĕ, вĕсенчен 14 пĕлтерĕвĕ суя пулнă. Паллă ĕнтĕ, çакăн пек алхасни ĕçре пысăк чăрмав кўрет, çав хушăрах пулăшу тепĕр вырăнта чăннипех те кирлĕ пулма пултарать. Çавăнпа та кунта выляни-шўтлени пачах та вырăнлă мар. Ун пек утăм тăвиччен тĕплĕнрех шутласа пăхмалла. Маларах пĕлтернĕччĕ ĕнтĕ, кирек епле инкек пулсан та мобиль операторĕсен урлă 112 е 010 номерсемпе шăнкăравласа пĕлтерме пулать, кĕске хушăрах сирĕн ыйтăва кирлĕ çĕре çитереççĕ.

Ял тăрăхĕн пуçлăхĕн те пĕрле пухăнсан калаçмалли сахал мар. Умра тата пире пысăк ĕç – суйлав – кĕтет.

– Ял активĕнчен малашнехи ĕçхĕл чылай килет. Раштав уйăхне суйлав пулмалла. Çак пысăк пĕлтерĕшлĕ ĕçрен никамăн та аякра юлмалла мар, кашни çынна явăçтармалла, – терĕ ял тăрăхĕн пуçлăхĕ А.В. Лаптев малашлăхра пире пысăк ĕçсем кĕтнине тĕпе хурса.

Ĕç ушкăнĕ Мăн Сĕнтĕрти ватă çынсен тата инвалидсен вăхăтлăх пурăнмалли уйрăмĕнче пулса курчĕ, унти ĕçхĕлпе паллашрĕ. Кунта вунă çын хўтлĕх тупнă. Хăйсен çĕр лаптăкĕнчен хĕле валли пахча çимĕç çителĕклĕ пухса янталанă. Эпир пынă самантра юсав ĕçĕсем вĕçленейменччĕ-ха. Ватă çынсем кунти хўтлĕхпе кăмăллă.

– Ватă çынсемшĕн паянхи ответлă ĕçченсем сахал мар тăрăшаççĕ. Малашне те çаплах пултăрччĕ ĕнтĕ, ыранхи куна татах та ăнăçлăрах тума Турри пиллетĕр вĕсене. Паянхи пурнăçа ўпкелеме сăлтавĕ çук, – терĕ чылайранпа кунта хўтлĕх тупнă кинемей.

Унтан ушкăн Каршлăхри интернат çуртне çитрĕ. Çакăнта 26 ватă пурăнать. Кунта килсен чи малтан типтерлĕх, илемлĕх куçа тыткăнлать. Ватă çынсем хăтлă пўлĕмсене пĕршерĕн е икшерĕн пурăнаççĕ, хăшĕ-пĕри вара кунта мăшăр та тупнă. Районти социаллă пулăшу уйрăмĕн ертўçи Н.П. Петрова кунта тăтăшах пулать, кашнин шăпине аван пĕлет, кашни валли ăшă сăмах тупать. Ахальтен мар ĕнтĕ пĕр ватă çын ăна курсан чи çывăх çынна кĕтнĕ евĕр хумханчĕ, куççуль кăларса аллаăн тытăнса чылайччен чунне уçса калаçрĕ.

– Ватă çын кирек хăçан та пысăк хисепре пулнă, çавна май Раççей тата Чăваш Правительствисен шайĕнче уйрăмах сирĕн тĕлĕшпе сахал мар курăмлă ĕç пурнăçласççĕ, çăмăллăхсем, хушма тўлевсем кĕртрĕç. Палăртма кăмăллă, хăш-пĕр пособисем Чăваш Республикинче ытти регионсенчинчен пысăкрах та. Çакă йăлтах Правительство шайĕнче тўрĕ кăмăллă çынсем ĕçленипе çыхăннă. Астăватăр пулĕ, чылай маларах тĕрлĕ пособие ырă тата туллин илесси уксахлатчĕ те, – терĕ Нина Пантелеевна социаллă тўлевсем енĕпе халĕ ĕç япăх мар пурнăçланнине палăртса.

Çак шухăш-тĕллевпе кунта ĕçлекенсем тата хўтлĕх тупнисем пĕр кăмăллă пулчĕç. Урăхла вара майĕ те, çак ырă утăма хамăр пурнăçра яр уççăн туятпăр мар-и?

Çапах та манăн пĕр хисеплĕ ветеранпа уйрăммăн сăмахласа пăхас, унăн шухăш-кăмăлне пĕлес килчĕ.

– Эпĕ халĕ сакăр вунă çултан та иртрĕм, пурнăç тăршшĕпе вара мĕн кăна тўссе ирттермерĕм. Çамрăк чухне эпир ăшă çи-пуç та çие укса курайманăмăр, капăрри пирки вара сăмах та çук. Урасем çăпатапаччĕ, ал-урасен сивĕпе кўтсе çитетчĕç. Вăрман каснă, вăкăрсемпе суха тунă. Эпир улăм витнĕ пўртсенче ўсрĕмĕр. Ĕçлес, пурăнас текенсене паян патшалăх пулăшать. Ара пурнăçĕ ырă еннелех улшăнать мар-и, – терĕ нумаях пулмасть кунта килме тивнĕ хĕрарăм иртнине хальхи вăхăтрипе танлаштарса.

Çавăн пекех пĕрлехи информаци кунне ытти ĕçченсем те хутшăнчĕç. Кирек епле тĕл пулу та ыйтусемсĕр иртмест пулĕ. Унта хутшăнакансем тĕрлĕ ыйту çине хуравларĕç.

**Р. ИЛЛАРИОНОВА.**

Саламлатпăр



Горячо и сердечно поздравляем верного друга и товарища **КИРПИЧНИКОВА Юрия Николаевича**, мастера своего дела, любителя спорта и спортсмена, долгое время работающего в Моргаушском участке Северных электрических сетей ОАО «Чувашэнерго», 60-летним юбилеем. Желаем здоровья, счастья и успехов везде и во всем.

**С поздравлением: друзья, товарищи, сослуживцы, электрики района, соседи по улице Южная с. Моргауши, Яндушкин В.И. из Юнгапоси, Шурновы.**



Савнă мăшăра, хаклăран та хаклă, юратнă аннене, кукамая, çывăх тăвана – Кашмаш ялĕнче пурăнакан **Вера Васильевна МАЙОРОВĂНА** 60 çулхи сумлă юбилей ячĕпе чун-чĕререн саламлатпăр. Ĕмĕрў шур пир пек вăрăм, пурнăçу хушпу кĕмĕлĕ пек çутă, сывлăху юман пек çирĕп пултăр. Эпир сана юрататпăр, хисеплетпĕр, санпа мухтанатпăр.

**Саламлаканĕсем: мăшăрĕ, 3 хĕрĕпе кĕрўшĕсем, 6 мăнукĕ, хăти-тăхлачисем, мĕн пур тăванĕ.**



Çатракасси ял тăрăхĕнчи Кашмашра пурăнакан хаклă мăшăра, юратнă аттене, ывăла, хисеплĕ тăвана – **Вячеслав Леонидович ЩУКИНА** 55 çул тултарнă ятпа чун-чĕререн ăшшăн саламлатпăр. Ĕçрен те, çынна пулăшасран та пăрăнмансскере тулли пурнăç валли çирĕп сывлăх, иксĕлми телей, вĕççĕр-хĕрсĕр ăнăçу сунатпăр. Пурнăç çулĕ такăр та вăрăм килтĕр, чир-чĕр санран пăрăнса ирттĕр. Кил-çурту тăвансемпе юлташсенчен, сĕтелў çăкăр-тăвартан, кăмăлу çемье юратăвĕнчен ан татăлтăр.

**Саламлаканĕсем: мăшăрĕ, ывăлĕпе хĕрĕ, амăшĕ, çывăх тăванĕсем.**

АПК аталанăвĕ

# Яла çĕнĕ техника килет

Районти ял хуçалăх производство кооперативĕсемпе хресчен (фермер) хуçалăхĕсен машинăпа трактор паркĕ çĕнелсех пырать. Çакă районти производство интенсивлăхне, ĕç продуктивлăхне, механизаторсен ĕç условийĕсене лайăхлатса çĕнĕ аталану шайне çĕкленме пулăшать.

Муркаш енре ял хуçалăх техники çĕнелсе пынине унччен хи техника хатĕрĕсем «ватăлса» çитнипе çеç сăлтавламалла мар. Пирĕн çĕр ĕçченĕсем те аграри наукин çĕнĕлĕхĕсене пурнăçа кĕртме тăрăшаççĕ. Çак сулпа кайса пĕчĕк тăкаксемпех производствăн пысăкрах картлашкисене çĕнме тăрăшаççĕ.

Иртсе пыракан ял хуçалăх çулĕ те ял хуçалăхĕнче ĕçлемелли çĕнĕ техника туянассипе пирĕн хуçалăхсем рекордлă укçа-тенкĕ тăкаланине çирĕплетрĕ. Кăрлач–çурла уйăхĕсенче агропромышленноть комплексĕн районти предприятийĕсем ял хуçалăх техникине 65 миллион тенкĕлĕх 62 единица туяннă. Вĕсенчен 20-шĕ – тракторсем, 2-шĕ – тиев турттармалли автомашинăсем, 3-шĕ – «хир карапĕсем», 4-шĕ – тымар çимĕç пухмалли агрегатсем, 2-шĕ – çĕр улми кăлармалли комбайнсем. Ыттисем – ял хуçалăх машинисем.

Ял хуçалăх техникине çĕнетессипе тата çĕнĕ технологипе ĕçлемелли оборудованисем туянассипе Е. Андреев яч. хис., «Оринино», «Свобода» хуçалăхсемпе «Путь Ильича» агрофирма тата «ВаСем» чикĕллĕ яваплăхлă обществе нумай ĕçлерĕç. «Путь Ильича» агрофирма, тĕслĕхрен, пирĕн районта халиччен пулман трактор туянчĕ. Вăл Канадăра туса кăларнă 375 лаша вăйĕллĕ трактор. «ВаСем» чикĕллĕ яваплăхлă общество икĕ «Палессе» «хир карапĕпе» çĕр улми кăлармалли икĕ комбайн туянни те районти техника хăватне ўстерчĕ кăна.

Çĕнĕ техника сĕрмеллисунтармалли материалсен тăкакне чакарни, ял хуçалăх продукцийĕн хăй хаклăхне пĕчĕклетни, çак çулпа пыни хуçалăхсен экономика хăватне ўстерни никамшăн та вăрттăнлăх мар.

**А. БЕЛОВ.**

Объявления

**Чувашская Республика**
**Администрация Моргаушского района**
**ПОСТАНОВЛЕНИЕ**
**23.09.2011 г. № 998**
с. Моргауши

**Об утверждении перечня земельных участков, подлежащих предоставлению многодетным семьям на территории Моргаушского района**

В соответствии с законом Чувашской Республики №10 от 01.04.2011 «О предоставлении земельных участков многодетным семьям в Чувашской Республике», постановлением администрации Моргаушского района №841 от 22.08.2011 г. «О порядке предоставления многодетным семьям в собственность бесплатно земельных участков, находящихся в муниципальной собственности Моргаушского района Чувашской Республики», утвердить перечень земельных участков, подлежащих предоставлению многодетным семьям на территории Моргаушского района. (Приложение №1).

**Глава администрации района**
**Ю.А. ИВАНОВ.**

Приложение № 1
к постановлению администрации
Моргаушского района
№ 998 от 23.09.2011 г.

**Перечень**
**земельных участков, подлежащих предоставлению многодетным семьям на территории Моргаушского района**

| №№ п-п | Местоположение, адрес | Кадастровый № земельного участка | Площадь земельного участка, га | Вид разрешенного использования земельного участка |
|---|---|---|---|---|
| Моргаушское сельское поселение | | | | |
| 1-1 | Чувашская Республика, Моргаушский район, Моргаушское сельское поселение, с. Моргауши, ул. Чапаева | 21:17:160101:357 | 0,06 | Для индивидуального жилищного строительства |

* * *

**Администрация Моргаушского района в районной газете «Çĕнтерў ялавĕ» от 07 сентября 2011 года за № 69 (7923) опубликовала сообщение о наличии свободного земельного участка распределяемого на праве долгосрочной аренды.**

**В связи с допущенной ошибкой в объявлении вместо «для ведения прудового хозяйства» следует читать «для ведения личного подсобного хозяйства».**

# Кил тата хушма хуçалăх



## Харпăр хăй вăйне ытларах шанаççĕ



Машина тăвакансен кунĕ умĕн республикăра иккĕмĕш çул ĕнтĕ граждансем килĕсенче ăсталанă трактор техникин «21 ĕмĕрти Кулибин» конкурсне ирттереççĕ. Вăл «Трактор завочĕсем» Концерн, Раççейри машинăсем тăвакансен Пĕрлĕхĕ ертсе пынипе тата Чăваш Республикин Ял хуçалăх тата Экономика аталанăвĕн, промышленноçпа энергетика тата Суту-илӳ министерствисем пулăшнипе пурнăçа кĕрсе пырать. Пĕлтĕрхи пекех кăçалхи конкурс та икĕ номинаципе иртет: уйрăм çынсем ăсталанă трактор техники; ял хуçалăх машинисемпе оборудованисем.

Пĕлтĕр иртнĕ пĕрремĕш конкурса пирĕн районтан 9 ăстаçă хутшăннăччĕ: Мăн Шашкартан П.В. Андреев, Юнкăран Н.В. Ермаков, Кăпасран А.П. Соколов, Юнкăран В.П. Пигачев, Шетмĕпуçĕнчен В.М. Димитриев, Тойкилтĕрен В.П. Саватеев, Яраккассинчен А.В. Клопов, Кораккассинчен А.Я. Николаев, Калайкассинчен А.С. Клопов. Конкурс пĕтĕмлетĕвĕпе жюри членĕсем Юнкăран пынă Валерий Прокопьевич Пигачева пĕрремĕш премие – 10 пин тенкĕ – парса чысланăччĕ. Вăл конкурсра трактор çинчи кранран çĕр улми кăлармалли агрегат таран ял хуçалăх техникин 6 единицине хăйĕн аллипе ăсталанине кăтарнăччĕ. Муркашсене çав ÿсĕм ун чух самай хăпартлантарчĕ.

**Пирĕн енри «Кулибинсем»**

Кăçал «21 ĕмĕрти Кулибин» конкурса хутшăнса Муркашри хăш ăстан пултарулăхĕ техника ăсчахĕсене тĕлĕнтерĕ? Кăна жюри членĕсем татса парĕç. Паян вара эпир сире асăннă конкурса хутшăнма кăмăл тунисемпе паллаштаратпăр. Вĕсем: Шетмĕпуçĕнчи Владислав Мефодьевич Димитриев, Юнкăри Николай Васильевич Ермаков **(сăн ӳкерчĕкре)**, Юнкăри Валерий Прокопьевич Пигачев, Калайкассинчи Владимир Станиславович Клопов, Кораккассинчи Анатолий Яковлевич Николаев.

Юнкăра пурăнакан Николай Васильевич Ермаков пĕрремĕш çул мар ĕнтĕ пушă вăхăта техника ăсталассипе ирттерет.

– Çак килеĕ 2004 çулта килти хушма хуçалăхра ĕçлеме кивĕ мотоблок туянсан çуралчĕ, – каласа парать техника ăсти. – Кăшт ĕçлесенех унăн хăвачĕ çителĕксĕртерех пек туйăнчĕ. Вара çак техника принципĕпех шанчăклăрах та вăйлăрах, çĕр культивациленĕ, утă çулнă, çĕр улми кăларнă вăхăтра ларса ĕçлемелли техника пуçтарса хута ятăм. Ăна «Луноход» ят патăм.

Çĕнĕ агрегат 8 лаша вăйĕ чухлĕ пулни те ăстаçăна лăплантарман. Кивĕ ВАЗ-2105 автомашина туянсан вăл 60 лаша вăйĕллĕ техника пуçтарса хута ярать. Ку техника хатĕрĕн халĕ хăвăртлăх передачисем 25, тăватă хăвăртлăхлă ВОМ, Р-82 гидрораспределитель т. ыт. те.

Харпăр хăй вăйне ытларах шанакан пирĕн ентешĕн ĕмĕчĕсем вара тата пысăкрах.

**А. БЕЛОВ.**

**Пирĕн пата çыраççĕ**

## Кĕр мăнтăрĕ

Кашни тапхăрăн хăйĕн вăхăчĕ тата илемĕ. Урамра кĕрккунне хуçаланать. Ку вăхăтăн кашни утăмĕнчех эпир уй-хирсемпе пахчасем пушаннине, пÿлмесемпе нÿхрепсем тулнине куратпăр.

Кĕр кунĕсенче килти хушма хуçалăхсенчи пахчасемпе анкартисем тĕрлĕрен пахча çимĕçпе тата улма-çырлапа мĕн тери пуян курăнаççĕ! Паллах пур хуçалăхра та пĕр пек мар ĕнтĕ. Аса илер-ха çуркунне пахчара çĕр улми лартнă вăхăта. «Тухăçлă пултăр, йышлă тухтăр», – тетпĕр касăсене çĕр улми вăрлăхĕ пăрахнă май пахча хуçине ырă сунса. Анчах… Пĕр кунта лартнă çĕр улми те кĕр çитессĕн кашни пахчарах тĕрлĕрен тухать. Камăн аннă вăл, камăн вара майăртан та иртеймен.

Эпир кăçал хамăрăн килти хушма хуçалăхра çĕр улмин виçĕ сортне лартса туса илтĕмĕр. Вĕсем çаксем: «голландский» – 10 рет, «невский» – 10 рет, «нида» – 11 рет. Малтанхисем вăтам вăхăтра пулса çитекен çĕр улмисем пулсан, «нида» сорт – кая юлса çитĕнекен çĕр улми.

Пĕлтĕр «иккĕмĕш çăкăр» сахал пулнăран çак çимĕç кăçал утă уйăхĕн пуçламăшĕнчех пĕтсе çитрĕ. Яшка-нимĕр пĕçерме пасара кайса туянмала мар-ши тесе шухăшлаттăмăр. Анчах та утă уйăхĕн 10-мĕшĕнче çĕр улмин «невский» сортне кăларса пăхрăм та пасар шухăшĕ сирĕлсе кайрĕ. Чăх çăмарти пысăкăш çĕтĕннĕ çĕр улмине апат-çимĕçре усă курма пуçларăмăр. Кĕр çитсен те «невский» сорт тухăçĕ ыттисенчен пысăкрах пулчĕ – гектар çине илсе шутласан 180 центнер. «Голландскийпе» «нида» сортсем те хăйсен тухăçне япăх мар пачĕç. Савăнтарчĕç вĕсем пирĕн çемьене. 10 сотка çинчен нÿхрепе пĕтĕмпе 1700 килограмм çĕр улми кĕчĕ. Ку вăл пĕлтĕрхинчен 3 хут ытларах!

Пахчара халĕ купăста, кишĕр, хĕрлĕ кăшманпа выльăх кăшманĕ çеç ÿсеççĕ. Улмуççисенчен вара икĕ йывăç çимĕçĕпе савăнтарма пăрахман-ха: кая юлса пулакан антоновка тата шурă антоновка. Вĕсене эпĕ пĕрремĕш тăм ÿкмесĕр нихăш çул та пуçтармастăп. Кăçал çу пĕтмĕшĕ типĕ тăнă май пан улмисем питĕ тăкăнчĕç. Çакна курса тăрса ир пулакан «московская грушовка», «шурă налив», «хĕрлĕ налив», «коричневая полосатая» сортсене маларах пуçтарса илтĕм. Кая юлса пулакан «титовка» сорта та нумай лартмарăм.

Хамăн пахчара эпĕ виçĕ тĕрлĕ чие çырли йывăççисене çитĕнтеретĕп. Вĕсем: хăмăр тĕслĕ пулакан вырăнти тата «Владимирская» сортсем, хĕрлĕ пулакан тата хурăн туратисем пек аялалла усăнса ÿсекен туратсемлĕ чие йывăççи. Вырăсла ăна «красная плакучая» сорт теççĕ. Пурте кăçал ăнса пулчĕç, пысăк тухăçпа савăнтарчĕç.

Çавăн пекех иртнĕ çу кунĕсенче хура тата хĕрлĕ хурлăхан, крыжовник тĕмĕсем пуян тухăçлă пулчĕç. Паянхи манăн тĕллев – вĕсене хĕл каçма ăнăçлă хатĕрлесси.

**Н. ПЕТРОВ,**
**ĕç ветеранĕ.**
Нискасси ялĕ.

## Илемлĕх диети

**Сăмах – сывлăх хуралçине**

**(Вĕçĕ. Пусл. иртнĕ номерсенче).**

Сиенлĕ йăла-йĕркерен пăрăнса хăвăр çине çаврăнса пăхăр-ха, ÿт-пÿ аталанăвне сăнăр-ха, кĕлетке илемне тишкерĕр-ха – çакă вăл пулас илемĕн никĕсĕ.

Паянхи калаçура илемлĕх диети пирки чарăнса тăрăп.

Канлĕ çывăрса тăрсанах лайăх кăмăл-туйăмпа тĕкĕр умне тăрса хăвна сăна. Эсĕ тĕкĕрте мĕнле курăнни – санăн апатланури йăлайĕрке. Рациона кăшт йĕркелесенех, юрăхлă блюдăсене тимлĕх уйăрсанах, апат-çимĕçе улма-çырла ытларах кĕртсенех санăн тĕкĕр умĕнчи илемлĕхÿ малалла утăмлĕ.

Мĕн çимелле-ха илемлĕ пулас та йăл-куллупа çынсене савăнтарас тесен?

1. Сăн-питри пĕркеленчĕксемпе кĕрешме рациона пулă ытларах пулмалла. Искусствăлла ÿстермен лосось, форель, сардина тата селедка пулăсем организмри юн çаврăнăшне йĕркелеме пулăшаççĕ. Вĕсемпе усă курниех пите естествăлла хĕрлĕ тĕс кĕртет. Çак пулăсем пирĕн организма омега-3 çу кислотипе тивĕçтереççĕ.

2. Ÿт-тир якишĕн кĕрешме апельсинсем, хĕрлĕ тата симĕс пахча çимĕç, кишĕр, дыня, помидор, шпинат, кăшкар ути çини нумай пулăшать. Паха витаминсемпе клеткăсене тивĕçтерсех тăни ÿте илем кĕртет, ăна якатать, чир-чĕрсенчен лайăхрах хÿтĕлет.

3. Илемлĕ кулă йĕркелеме сĕт продукчĕсемпе апатланни пулăшать. Кунта рационра çăратнă сĕт, пĕчĕк çу хисепĕллĕ йогуртсем, сырсем пулни пысăк пĕлтерĕшлĕ. Сĕт продукчĕсенче кальци нумайăн шăл эмалĕсене çирĕплетет, вĕсене илемлĕрех курăнтарать. Сĕт продукчĕсенче çавăн пекех организма кальци йышăнма пулăшакан Д витамин та чылай пулнине палăртмалла.

Çÿлерех каланисемпе пĕрлех эсир апатлануна хура шоколадпа, хĕвел çаврăнăшĕпе, симĕс чейпе, çырласемпе, цитрус çимĕçĕсемпе усă курни сирĕн организма витаминсен талăкри нормине çителĕклĕх тивĕçтерме пулăшать. Витамин пур пулсан сирĕн организмăн та вăтăлма вăхăт çук. Акă ăçта вăл илемлĕх диети!

**Л. ИВАНОВА,**
**районти тĕп больницăн**
**врач-психотерапевчĕ.**

**Ял çыннине паян кирлĕ сĕнÿсем**

## Хĕрлĕ кăшман упрасси

**Кĕр йĕпе тăрать. Пахча пысăках мар пулсан та çимĕçне сахал мар туса илтĕмĕр. Халĕ йĕпе-сапапа тупăшсах йăрансене пушататпăр. Умра вара вĕсене епле упрасси çивĕччĕн тăрать. Хĕрлĕ кăшмана упрасси пирки район хаçатĕнче каласа пама май çук-ши?**

**В. СМИРНОВ.**
Хопкĕпер ялĕ.



***Вулавçă хускатакан ыйту паян нумайăшне канăç паманнине шута илсе хамăр тĕпеле ăста пахчаçăна тата агронома Оринин ял тăрăхĕнчи Тереç ялĕнче пурăнакан Александр Матвеевич ШАРИКОВА чĕнтĕмĕр.***

– Йĕпе çанталăкра та ыранхи кун пирки шухăшласа пуç ватакан çĕр ĕçченне хисеплемесĕр тăма çук. Çакна шута илсех В. СМИРНОВĂН ыйтăвĕ çине те хурав парас терĕм.

Хĕрлĕ кăшман (апат-çимĕç кăшманĕ те теççĕ) ытти тымар çимĕç пекех управа хумалли путвалта пĕрремĕш кунсенче сывлăшăн мĕнле температура пулнине пит асăрхать. 4 градус ăшăрах хĕрлĕ кăшманăн çеçкисем аталанма пуçлаççĕ. Çакна шута илсе хĕрлĕ кăшмана упрама хумалли пÿлĕме тымар çимĕç хуричченех çителĕклĕ сивĕтсе çитермелле. Нÿрĕклĕхе те хĕрлĕ кăшман лайăх туять. Тымар çимĕç упранакан пÿлĕмре вăл пысăк пулмалла. Хĕл кунĕсенче хĕрлĕ кăшмана упрамалли чи мелле условисем çаплараx: сывлăш температури 1–2 градус ăшă, сывлăшри нÿрĕклĕх 85–90 процент.

Апат-çимĕç кăшманне путвалта, сывлăш лайăх усăлакан пÿлмесенче упрамалла. Пÿлмесене стенасенчен 10 сантиметрта вырнаçтармалла. Вĕсен çÿллĕшĕ 1 метр, енсенчи хăмасен хушши 4-5 сантиметр пулмалла. Пÿлмесен тĕпĕ те путвал урайĕ мар, решеткелесе тунă никĕс пулсан лайăх. Çак никĕс урайĕнчен 15-20 сантиметр çÿллĕрех пулни вырăнлă. Кун пек чух хĕл каçа сывлăш куçса çÿрессе лайăхланать. Управ вырăнне çапла хатĕрлесен хĕрлĕ кăшман пĕр тикĕс сивĕнет: вăл тарламасть, шăтса каймасть.

Пахча çимĕç ещĕкĕсене упрама хурсан та хĕрлĕ кăшман лайăх хĕл каçать. Управ ăнăçлăрах пултăр тесен апат-çимĕç кăшманне управа хунă чух йывăç кĕлĕпе е пурăпа пудрăлани те ырă тĕслĕх. Çакăн пек туни хĕллехи вăхăтра тĕрлĕ чир-чĕрсенчен лайăх сыхлать.

Путвал çук пулсан хĕрлĕ кăшмана кладовкăра ещĕксене хурса хăйăрпа витсе хуни, çакăн хыççăн хăйăр типсе каясран ăна сăнасах тăни те управ вăхăтне палăрмаллах тăсать.

Ăнăçлă хĕл пултăр сире, тăрăшуллă пахчаçăсем!

## Кишĕр те тимлĕх ыйтать

**Кăçалхи çанталăк условийĕсене пула кишĕр те ăнса пулчĕ. Ăна упрама хунă чух кил хуçин мĕн асра тытмалла? Кишĕр упрас çĕрте мĕнле çĕнĕлĕхсем пур? Мĕн шутлаççĕ кун пирки специалистсем?**

**И. ГОРОХОВА,**
**ĕç ветеранĕ.**



***Ыйту хускатакана тата район хаçачĕн вулаканĕсене «Пахчаçă» хаçатра В. ЧЕРНЯЕВА агроном каласа панипе паллаштаратпăр. Енчен те хаçат вулакансен хăйсен сĕнÿсем пулсан, тархасшăн, çырса пĕлтерĕр. Сире валли те «Кил тата хушма хуçалăх» кăларăмра вырăн пулĕ.***

– Кишĕр упранасси вăл епле пиçсе çитнипе тата унра сахăрпа глюкоза шайлашăвĕ мĕнле пулнипе тÿрремĕнех çыхăннă. Енчен те кишĕр инфекци çаклатман пулсан вăл япăх упранни сортпа, туса илнĕ тата управа хунă условисемпе çыхăнать. Конус евĕрлĕ «Валерия», «Шантэнэ», «Несравненная», «Московская зимняя» сортсем ыттисенчен лайăхрах упранаççĕ.

Кишĕр хăвăрт аманнине тата нÿрĕк сухатнине пĕлсе тăнă май ăна пухса кĕрнĕ чух тымар çимĕçе амантмасăртарах пуçтарма тăрăшăр. Эрне маларах çеçкисене 2–3 сантиметр хăварса çулни те аван.

Мĕнле упрамалла-ха кишĕре?

Тымар çимĕçе кăларсанах хĕвел ÿкмен çĕрте типĕтсе илмелле. Çĕр улми пекех 10-14 кун карантинра выртарнă хыççăн япăхланнă кишĕрсене иртсе управа хурассипе ĕçлеме пуçламалла.

Кишĕр çанталăк шăнтнине тÿсеймест. Кун пек чухне ăшăнсан вăл çĕрме пуçлать.

Кишĕрĕн пысăк парттине нÿхрепсенче е путвалсенче 50 килограмм вырнаçакан полиэтилен михĕсенче упрама меллĕ. Лартнă михĕсен анисене çыхмалла мар.

Кишĕрĕн пуçне шалалла туса купаланă хыççăн ăна нÿрĕ хăйăрпа витни те – управ мелĕ. Кун пек чухне хăйăра çунтарнă известь, пурă хушмалла.

Упрама хунă путвалта е нÿхрепре сывлăш температури 5 градус ăшăран пысăкрах пулсан кишĕр шăтса каять. Çавăнпа та унти сывлăш температури 0 градуса çывăх тăмалла.

Технологие пăхăнса упрасан кишĕрпе çитес çу кунĕсемччен те усă курма пулать. Сĕтел çинчи кишĕр вăл – апатланури витамин.

# Чĕрене упрамалла

## Ыран – Сывă чĕре кунĕ

**Чĕре тата юн тымарĕсен чирĕсем çулсерен тĕнчери 17 миллион ытла çыннăн вилĕм сăлтавĕ пулса тăраççĕ. Чăваш Республикинчи кăтарту та питĕ пысăк: пурнăçран уйрăлнă çынсен 46 процентĕ ытла çак чирсене пула çĕре кĕнĕ. Вĕсенчен 30 процентне яхăн – ĕçлеме пултаракан ўсĕмрисем.**

Пĕтĕм тĕнчери сывлăх сыхлавĕн организацийĕ сĕннипе çулсеренех авăн уйăхĕн юлашки вырсарни кунĕнче – вăл шăпах ыран – Сывă чĕре кунне ирттереççĕ. Малтарах асăннă хăрушă цифрăсене шута илсен çакă питĕ вырăнлă. Пĕр кун та пулин çыннăн хăйĕн чĕрин сывлăхĕ пирки шутламаллах.

Чĕре сывлăхне нумай çула упраса хăварас тесен мĕн тумалла-ха?

Малтанах – пирус туртмалла мар. Табак тĕтĕмĕллĕ пўлĕмре ларни те чĕрепе юн тымарĕсемшĕн сиенлĕ.

Апата тăвар сахал ямалла. Тăварланă тутлă апат-çимĕç уяв сĕтелĕ çинче пулни те çителĕклĕ. Организмра тăвар ытлашши пулни пўресене шĕвеке кăларма чăрмантарать. Çакă вара чĕрене те, юн тымарĕсене те хушма йывăрлăх кўрет.

Артерисенче холестерин тăхисем ан пухăнччăр тесен апатланура выльăх çăвĕн хисепне чакармалла: çусăр какай çимелле, апата тип çупа хатĕрлемелле, ăшаланине мар, пĕçернĕ е тата пăшăхланă çимĕç çимелле. Пахча çимĕç, улма-çырла сĕтел çинчен таталмалла мар. Юн пусăмĕ ўснипе апăракансен кофе, çăра чей, алкоголь ĕçмесен лайăхрах.

Вăй-хал ĕçĕ те чĕре сывлăхĕшĕн пĕлтерĕшлĕ. Эрнере пилĕк хут çуршар сехет те пулин гимнастика тумалла. Вăй-хал активлăхĕ чĕре мышцин ĕçне лайăхлатма, кĕлетке висине йĕркене кĕртме пулăшать. Çак тĕллевпе чупни, ишни, утни усăллă. Кĕлетке виçи ытлашши пулсан вара чĕрене йывăр килет.

Чĕрепе юн тымарĕсене хўтĕлекен хăватлă меслет – ырă кăмăллă, тараватъ пулни. Телейлĕ çынсем сайрарах чирлеççĕ.

Çулталăкра пĕрре ЭКГ тĕрĕслевĕ ирттермелле. Чĕрепе юн тымарĕсен чылай чирĕ – темскер йĕркеллех марринe туйнинчен пуçланать. Чире малтанхи тапхăрта тупса палăртсан сиплев те тухăçлăрах пулĕ.

**Сентябрĕн 26-мĕшĕнче Муркашри тĕп больницăра усă алăксен кунĕ иртет. Больницăна пыраканăн 10 сехетрен пуçласа кардиолог патĕнче консультаци илме, холестерин пуррине суккине пĕлме, юнри сахăр шайне тĕрĕслеме, липидограмма тума май пулать.**

**И. КОРОЛЬКОВА, кардиолог врач.**

Çул çинче

# Ўсĕр çын хăрушлăх кăларса тăратать

Мускав–Ĕпхў автоçулпа йĕркеллĕ пыракан машина умне ăнсăртран çын чупса тухать. Машинăна çав кĕске самантрах тытса чарма май çук çав: çуран çўрекенĕн пурнăçĕ çул çинчех татăлать.

Сарăмсăр вилнĕ çын вара самаях ўсĕр пулнă мĕн. Çакна экспертиза çирĕплетрĕ. Кунсăр пуçне тата унăн япалисемпе пĕрле икĕ кĕленче асептолин (90 процент алкоголь) та тупнă. Çуран çўрекен Етĕрне районĕн çынни пулнине палăртнă.

Çакăн пек тĕслĕхсене пула çул çинче сахал мар инкек пулать. Иртнĕ сакăр уйăхра акă пирĕн район территорийĕнчи çулсем çинче çуран çўрекенсем çине машина кĕрсе кайнă çичĕ тĕслĕхе регистрацилерĕмĕр. Çапла вара икĕ çуран çўрекен вилнĕ, çиччĕшĕ аманнă. Çуран çўрекенсен айăпĕпе сиксе тухнă икĕ инкекре пĕр çын аманнă тата пĕр çын вилнĕ. Сăлтавĕ – ўсĕр пулни тата транспорт хыçĕнчен ăнсăртран çул çине тухни. Тĕслĕхсене пĕтĕмлетсен инкексен 28,6 процентĕ çуран çўрекенсен айăпĕпе пулни курăнать.

Ўсĕр çуран çўрекен валли çул-йĕр хăрушсăрлăх правилисене пăснăшăн, шел те, питĕ çирĕп наказанийех пăхса хуман. Ўсĕрле вара çын çул çинче хăй мĕнле хăрушлăх кăларса тăратнине те шутламасть. Çĕрлехи вăхăтра уйăрмах.

Çакна шута илсе çуран çўрекенсене асăрханулла пулма тата тепĕр хут ыйтса калас килет. Çул çинчи ўсĕр çынсем пирки те шалти ĕçсен пайĕн дежурнăй чăсне 62-6-67 номерпе е ГИБДД пайне 62-1-58 номерпе шăнкăравласа пĕлтерме ан ўркенĕр. Çапла майпа эсир çул çинчи инкеке сирсе яма пултаратăр, тен, çынна вилĕм аллине те лекме памастăр.

**С. ИВАНОВ, районти ГИБДД уйрăмĕн пуçлăхĕ.**

## Пĕлтерўсем. Объявления

**Продается Газель-3302 грузовая с установленной молочной цистерной емкостью 900 л. 2007 года выпуска, пробег 122 тыс. км. Тел.: 8-927-845-70-53.**

* * *

**Покупаю корову, бычка, телку в живом виде. Тел.: 8-905-029-61-39. 2-5.**

* * *

**Куплю корову, бычка, телку, овец. Тел.: 8-905-342-39-43. 9-10.**

* * *

**Продаем комбикорма, зерно. Тел.: 8-927-843-52-40. 1-5.**

* * *

**Ремонт бытовых холодильников на дому. Гарантия, качество. Тел.: 8-905-199-83-87, 62-0-45. 4-5.**

* * *

**Февраль уйăхĕнче çиччĕмĕш пăруламалли хĕрлĕ-шурă тĕслĕ ĕне сутатпăр. Тел.: 8-927-853-98-40, 8-937-381-98-61.**

* * *

**Продаем пропаренные керамзитобетонные блоки, цемент, песок речной, гравмассу, керамзит. Тел.: 8-905-340-07-78. 3-5.**

* * *

**Продаем: доски 25-50 мм (обрезные, необрезные), брус, цемент, шифер, профнастил (крашеный, оцинкованный). Обращаться: «Рука мастера», с. Моргауши и д. Калайкасы. Тел.: 8-903-346-40-58. 5-5.**

* * *

**Грузоперевозки по району, Чувашии, России. Газель-фермер 6-тиместный, 3 метра. Тел.: 8-905-198-14-09. Александр.**

* * *

**Ĕне, вăкăр, тына, пăру, сурăх туянатăп. Тел.: 8-905-343-60-63. 5-8.**

* * *

**Продаю песок, гравмассу, бой кирпича, керамзитоблоки, с доставкой. Услуги экскаватора. Тел.: 67-66-95, 8-905-347-99-15. 4-5.**

* * *

**Ĕне, вăкăр, тына, пăру, сурăхсем туянатпăр. Тел.: 8-903-063-07-57. 5-5.**

* * *

**Хаклă хакпа вăкăр, тына, ĕне чĕрĕ виçепе тата ашпа туянатăп. Тел.: 8-905-343-46-23. 2-5.**

* * *

**2–4 уйăхри вăкăр туянатăп. Тел.: 8-937-373-32-13.**

* * *

**Сдается в аренду ферма, 1500 кв. м., д. Вомбакасы. Тел.: 8-937-691-67-93. 1-2.**

* * *

**ТД «Лотос» реализует: профнастил, профили, трубы новые, б/у, трубы для ограды и ворот, краски, утеплители, поликарбонат, банные печи, мотоблоки. Монтаж систем отопления, изготовление теплиц, оград для полисадников. ВЫ ЗВОНИТЕ, МЫ ДОСТАВИМ! Тел.: 8-927-665-27-26. 1-5.**

* * *

**Требуется водитель на школьный автобус в МБОУ «Большесундырская СОШ» Моргаушского района. Условия: стаж работы не менее трех последних лет на автобусе.**

* * *

**Требуются рабочие для сборки корпусной мебели в «Декор-мебель». Тел.: 62-6-60, 8-905-343-08-10. 2-2.**

* * *

**Требуется специалист по дизайну, знание ПК. Тел.: 8-903-345-75-76. 1-3.**

* * *

**Срочно продаю жилой бревенчатый дом с газовым отоплением и хозяйственными постройками, плодоносящий сад 40 соток в д. Мемеккасы Моргаушского района. Цена договорная. Тел.: 8-905-027-70-87. 2-2.**

* * *

**ТРЕБУЕТСЯ на постоянную работу в г. Чебоксары на ФГУП «Чувашское протезно-ортопедическое предприятие» Минздравсоцразвития России обувщик по пошиву ортопедической обуви. График работы: 8-часовой рабочий день при пятидневной рабочей неделе. Выходные дни: суббота, воскресенье. Оплата труда сдельная, своевременная, 13-18 тыс. руб. Тел. для справок: 62-46-28.**

Полици хроникинчен

# Аппăшне «тăн кĕртнĕ»

Ярапайкасси ял тăрăхĕнче пурăнакан аппăшĕпе йăмăкĕ темĕн пайлайман, хирĕçсех кайнă. Пĕри аллăран иртнĕ, тепри хĕрĕх урлă каçнă. Расна ўсĕмрисен, тăвансем пулсан та, шухăш-кăмăлĕ тĕрлĕрен килсе тухнă. Кĕçĕннреххин вара вăйĕ ытларах пулнăран чышки те хăвăртрах чăмăртаннă. Аслин йăмăкне пĕчĕк чух сăпкара «утъакка» сиктернĕшĕн унран чышкă-муклашкă тутанма тивнĕ. Мĕнле калаççĕ-ха çакна чăвашра? Ял кулли теççĕ мар-и?

**Пичете районти шалти ĕçсен пайĕн материалĕсем тăрăх хатĕрленĕ.**


**Продаем: доски 25-50 мм (обрезные, необрезные), брус любого сечения, жерди, подтоварник. Изготовим на заказ: срубы, беседки любого размера. Цена договорная, доставка по району бесплатно.
Тел.: 8-927-667-28-32, 8-919-656-13-84. 4-9.**

для пайщиков предъявителю объявления +1% по сбережениям
СБЕРЕЖЕНИЯ
• новые выгодные условия (частичное снятие, пополнение сбережений)
• пенсионерам - льготы
ЗАЙМЫ ЛЬГОТНЫЕ
• на покупку КРС - до 30 000 рублей
• на обучение - до 15 000 рублей
• на покупку и строительство жилья под материнский капитал
• срок пользования займом на покупку а\м увеличен до трех лет
КРЕДИТНЫЙ ПОТРЕБИТЕЛЬСКИЙ КООПЕРАТИВ “СОДРУЖЕСТВО”
Отделение № 3, с.Моргауши
ул.50 лет Октября, д.23, 2 этаж
www.kpksodrugestvo.ru
62-6-86
8-919-673-42-19

**Продаю: гравмассу, щебень, песок, керамзит, бетон, торф, чернозем. С доставкой. Скидки.
Тел.: 8-927-668-70-15. 4-13.**

**КУПЛЮ ПУХ, ПЕРО
новые и старые, мешаные перины и подушки с выездом на дом.
Куриное не предлагать.
Тел.: 8-962-561-81-15. Иван.**

В Москву и Московскую обл. требуются:
фасовщицы-упаковщицы, грузчики
(кондитерские фабрики, молочное производство, снековая продукция, мясокомбинаты, склады).
Питание, проживание предоставляются.
Вахта 15/15, 20/20, 30/15, 30/30, 60/30.
З/п от 25000 руб. (сдельная).
Тел.: 8(8352)23-22-22. 3-5.

пластиковые
ОКНА
Немецкое качество
Окна STAR
6-камерный профиль
ПО ЦЕНЕ 3-камерного
подробности по телефонам:
скидки до 35%
8-9603101816
Пенсионерам доп. скидки
Офис продаж в здании рынка с.Моргауши
Окна стали дешевле...

**БЕТОН, РАСТВОР любых марок.
Тел.: 38-87-78, 8-927-66-88-778.
Песок, ОПГС (гравмасса), щебень.
Тел.: 38-84-40, 8-927-66-88-440.
Доставка миксерами, самосвалами. 34-50.**

**ЗАКУПАЕМ ОПТОМ МОЛОКО
ОТ 500 КГ.
ТЕЛ.: 8-927-844-99-19. 1-2.**


**Администрация Хорнойского сельского поселения извещает о проведении общего собрания долевиков СХПК им.Ленина, которое состоится 05.11.2011 г. в 16 часов по адресу: Чувашская Республика, Моргаушский район, Хорнойское сельское поселение, д. Хорной, ул. Новая, дом № 14.**

**В повестку дня включены вопросы:**
1. О ходе выдела земельных долей на территории сельского поселения.
2. Изменение в законодательстве по выделу земельных долей.
3. Рассмотрение и утверждение списка невостребованных земельных долей.
4. Разное.

**Адрес места ознакомления с документами Хорнойского сельского поселения: д. Хорной, ул. Новая, дом 14.**
**Текст объявления размещен на информационных стендах и на сайте сельского поселения.**


**ПРИГЛАШАЕМ НА ВЫСТАВКУ–ПРОДАЖУ**
**30 сентября и 14 октября с 9 до 12 часов в РДК с. Моргауши**

– **глазные капли экстракт Алоэ по Филатову** (близорукость различной степени, нарушение механизмов адаптации зрения к темноте, центральная и периферическая дистрофия сетчатки, блефарит, конъюктивит, кератит, ирит, помутнение стекловидного тела, катаракта, комплексная терапия первичной глаукомы) – 490 руб.;
– **глазные капли «Хрусталин»** (катаракта, глаукома и др.) – 490 руб.;
– **сироп «СОТКА-Черничный»** (повышает остроту зрения) – 325 руб.;
– **жевательные конфеты «VIRTA Черника»** (для улучшения зрительных функций) – 65 руб.;
– **красное пальмовое масло «ЗЛАТА ПАЛЬМА»** 1,1 литр – 1850 руб (от двух бут. – 1650 руб.); 500 мл – 1200 руб.; 250 мл – 740 руб.; 125 мл – 930 руб. (для глаз).;
– **лечебные крема «Универсальный» – 460 руб., «Черное золото»** – 400 руб. (при мышечных и суставных болях, хондрозах, артрозах, остеохондрозе, при варикозном расширении вен и др.).
Также в продаже более 100 товаров для вашего здоровья и долголетия.


## Прогноз погоды

| | суббота 24 сентября | | | | воскресенье 25 сентября | | | | понедельник 26 сентября | | | | вторник 27 сентября | | | |
|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|
| Местное время | 04:00 | 10:00 | 16:00 | 22:00 | 04:00 | 10:00 | 16:00 | 22:00 | 04:00 | 10:00 | 16:00 | 22:00 | 04:00 | 10:00 | 16:00 | 22:00 |
| Облачность % | | | | | | | | | | | | | | | | |
| Осадки мм | | | | | | | | | | | | | | | | |
| Температура °С | +11 | +13 | +15 | +9 | +7 | +10 | +12 | +7 | +6 | +8 | +10 | +6 | +6 | +7 | +10 | +6 |
| Давление мм | 740 | 740 | 741 | 741 | 742 | 742 | 742 | 741 | 742 | 743 | 744 | 744 | 745 | 744 | 748 | 745 |
| Влажность % | 97 | 97 | 75 | 93 | 97 | 92 | 75 | 90 | 95 | 88 | 74 | 89 | 91 | 88 | 66 | 90 |
| Ветер | Ю-З | Ю-З | З | З | Ю | ШТЛ | З | З | С-З | С-З | З | З | З | З | С-З | З |
| м/сек | 3 | 2 | 4 | 2 | 1 | 0 | 2 | 3 | 3 | 5 | 7 | 6 | 4 | 5 | 6 | 4 |
| Солнце восход/заход | | 06:45 | 18:43 | | | 06:47 | 18:40 | | | 06:49 | 18:38 | | | 06:51 | 18:35 | |
| Луна восход/заход | | 02:13 | 17:11 | | | 03:41 | 17:28 | | | 05:10 | 17:43 | | | 06:42 | 18:00 | |
| фаза | | | | | | | | | | | | | | | | |


КИРПИЧ
более 500 видов и цветов
Газосиликатные блоки
ОПТОВЫЕ ЦЕНЫ
ТК “ТЕРМИНАЛ”
г.Чебоксары, Канашское шоссе,7/1, тел.30-55-15
г. Новочебоксарск, ул. Промышленная, 41, тел.73-84-12


ЗАО «Моргаушский кирпичный завод» выражает глубокое соболезнование электромонтеру Быкову А.В. в связи преждевременной кончиной отца

**БЫКОВА**
**Валерия Петровича,**
бывшего работника завода.


**Муркаш районĕнчи «Çĕнтерў ялавĕ» хаçат**

**УЧРЕДИТЕЛЬСЕМ:**
Чăваш Республикин Культура, национальноçсен ĕçĕсен, информаци политикин тата архив ĕçĕн министерстви.
ЧР Культура, национальноçсен ĕçĕсен, информаци политикин тата архив ĕçĕн министерствин «Муркаш районĕн «Çĕнтерў ялавĕ» хаçат редакцийĕ» автономи учрежденийĕ.

**Тĕп редактор А.И. ТИХОНОВ.**

АДРЕС: 429530, Чăваш Республики, Муркаш ялĕ, Мир урамĕ, 9А çурт.
ТЕЛЕФОНСЕМ: тĕп редактор - 62-1-36, яваплă секретарь - 62-2-82, бухгалтери - 62-1-35, пайсем: общество пурнăç пайĕ - 62-2-82, экономика тата социаллă пурнăç пайĕ - 62-1-38.
Факс: 62-1-36. E-mail: morpress@cbx.ru, redaction@cbx.ru

Çыхăну, информаци технологийĕсен тата массăллă коммуникаци сферине пăхса тăракан Федераллă службăн Чăваш Республикипе – Чăваш Енпе ĕçлекен управленийĕ 2009 çулхи раштавăн 7-мĕшĕнче ПИ ТУ 21-00073 № регистрациленĕ.

Калăпăшĕ 1,5 пичет листи.
Ал çырăвĕсене рецензилемеççĕ, каялла тавăрса памаççĕ, 2 страницăран пысăкраххисене йышăнмаççĕ.
Рекламăпа пĕлтерўсен чăнлăхĕшĕн вĕсене паракансем яваплă.

ИЗДАНИ ИНДЕКСĔ: 54822.
Хаçат чăвашла юн тата шăмат кунсерен тухать.
Номер дежурнăйĕ Белов А.П.
Пичете pană 23.09.2011 ç.
Пичете памалли вăхăт: графикпа – 17 сех. 20 мин., чăннипе – 17 сех. 20 мин.
Заказ Тираж 4357.

Номер набран и сверстан в АУ ЧР «Редакция Моргаушской районной газеты «Çĕнтерў ялавĕ», отпечатан в типографии ГУП "ИПК "Чувашия": 428019 г. Чебоксары, пр. И. Яковлева,13. Качество печати соответствует оттискам, предоставленным редакцией.